Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

8 (7542) № * Шăмат кун, 2008 çулхи февралĕн (нарăс) 2-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Республикăра

## *Мускаври тĕл пулусем*

Ытлари кун Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров Мускавра Раççей Правительствин Председателĕн пĕрремĕш çумĕпе Дмитрий Медведевпа, çĕршывăн Шутлав палатин председателĕпе Сергей Степашинпа, Раççей Патшалăх Думин Гражданла тата уголовнăй саккунсем, арбитраж тата процесс саккунĕсем енĕпе ĕçлекен комитечĕн председателĕпе Павел Крашенинниковпа, çавăн пекех Раççей Президенчĕн Администрацийĕн Ертÿçин çумĕпе Владислав Сурковпа ĕçлĕ тĕл пулусем тата калаçусем ирттернĕ. Тĕл пулусенче Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ыйтăвĕсене сÿтсе явнă.

## *Республика интересĕсене хÿтĕленĕшĕн*

«Независимая газета» кăларăм Экономика хыпарĕсен агентствин тĕпчевĕн кăтартăвĕсене – Раççейри чи лайăх лобби-стсен рейтингне пичетленĕ. Унта патшалăх тытăмĕсен представителĕсен проектсене лоббиллес тĕллевлĕ ĕç-хĕлĕн тухăçлăхĕсене кăтартса панă, çак проектсем вăл е ку регионăн е общество сийĕсен интересĕсене сăнлаççĕ. Чăваш Ен Президенчĕ Николай Федоров 2007 çул кăтартăвĕсем тăрăх чи лайăх 25 лоббист – регион лидерĕн шутне кĕнĕ.

Аса илтерер: Раççейре пĕтĕмпе 86 регион, Чăваш Ен интересĕсене çине тăрса хÿтĕленипе палăрнă Николай Федоров çак рейтинга тивĕçлипех кĕнĕ.

## *Депутат суйлавçăсемпе тĕл пулчĕ*



РФ Патшалăх Думин депутачĕ Н.М. Бударин çĕршыв парламентне суйланнă хыççăн республикăна ĕçлĕ визитпа килчĕ.

Пирĕн депутат парламентра строительство тата çĕр хутшăнăвĕсен комитетне кĕнĕ. Паллă ентеш Улатăрта пулнă чухне Сăр шывĕн çыранне çирĕплетме наказ илнĕ. Ку ĕçе тума 198 миллион кирлĕ.

Паллă космонавт Чăваш Республикин интересĕсене хÿтĕлессишĕн çине тăрса ĕçлеме шантарать.

## *Пурăнмалли чи пĕчĕк виçе*

Республика правительстви иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталшăн пурăнмалли чи пĕчĕк виçене палăртнă:

– тĕп социаллă демографи ушкăнĕсемшĕн – 3351 тенкĕ,
– ĕçлекен çынсемшĕн – 3593 тенкĕ,
– пенсионерсемшĕн – 2701 тенкĕ,
– ачасемшĕн – 3260 тенкĕ.

Пурăнмалли пĕчĕк минимум социаллă программăсем хатĕрлеме тата сахал тупăш илекен граждансене пулăшу пама кирлĕ.

## *Тĕнче Кубокĕ умĕнхи юлашки тĕрĕслев*

Юн кун Шупашкарта Çăмăл атлетика федерацийĕсен тĕнчери ассоциацийĕн (ИААФ) комиссийĕ пулчĕ. ИААФ вице-президенчĕ, Олимп ваййисен чемпионĕ Сергей Бубка ертсе пынă делегаци Шупашкар 23 Тĕнче Кубокне хатĕррине тĕрĕслерĕ.

Делегаци ăмăрту трассипе паллашрĕ. Ăмăртăва килекен спортсменсен пурăнмалли условийĕсемпе кăсăкланчĕ. Визăсемпе тивĕçтерес йĕркене те тишкерчĕ.

Хăвăрт утассипе Тĕнче Кубокĕ Шупашкарта ăнăçлă иртессе шанатпăр, пĕлтерчĕ С. Бубка.

Сиплев ĕçĕнчи çĕнĕ технологисем

## Физкультурăпа сыватаççĕ



*Мăн Сĕнтĕрте вырнаçнă 2-мĕш номерлĕ район больницинче пĕлтĕртенпе чирлисене физкультурăпа сыватассине мала кăларса ятарлă кабинет уçрĕç. Унта валли тренажерсем, скакалкăсем, мечĕксемпе ытти физкультура хатĕрĕ туянчĕç. Ю.М. Трофимов (сăн ÿкерчĕкре сылтăмра) ертсе пынипе кунта паян ачасем те, аслисем те чир хыççăн сывлăха çирĕплетеççĕ. Юрий Михайлович хăй мануаллă терапие аван пĕлнĕрен (вăл ку ĕçре 7-8 çул) ун патĕнчен чирлисем таталмаççĕ. Çак уйăрмăра пĕрремĕш çул мар ĕçлекен Сергей Иштудова (сулахайри) Светлана Белова массажистсем, сыватупа физкультура кабинечĕн инструкторĕ Нина Кузнецова та хăйсем çине хунă яваплăха çирĕп тытаççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа çывăх вăхăтрах кунта нумай функциллĕ кравать (массаж тума тата çурăм шăммине туртма) пулĕ, аппитерапи (пыл хурчĕсем сăхнипе сиплесси) тата таласатерапи (шывпа сыватасси) енĕпе ĕçлесси вăй илĕ. Пылчăкпа сиплеме пуçласси те инçетре мар.*

*– Çынсем пирĕн пата килеççĕ пулсан, эпир вĕсене кирлĕ. Пирĕн тĕллев вара – хамăр малалла анлăлатса пырасси, çĕнĕ технологисене алла илесси, – терĕç хăйсенчен уйрăлнă чух эсир сăн ÿкерчĕкре куракан сывлăх хуралçисем.*

*А. БЕЛОВ сăн ÿкерчĕкĕ.*

Район администрацийĕнче

## Хисеп грамотипе наградăланă

***Район администрацийĕн пуçлăхĕн январĕн 25-мĕшĕнчи 55 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

Çамрăк ăрăва пĕлÿ тата воспитани парассипе тунă çитĕнÿсемшĕн, нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн Оринин шкулĕн пуçламăш классен учительне **Фаина Петровна АЛЕКСАНДРОВАНА**;

Халăх сывлăхне упрассипе нумай çул тÿрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Уйкас Янасалти пĕтĕмĕшле практика врачне **Галина Иосифовна ГОРДЕЕВАНА**;

Ял хуçалăх производствинче нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçре активлă пулнăшăн:

**Римма Петровна ВОЛКОВАНА**, «Оринино» хуçалăхри хăрушсăрлăх техникин инженерне, профком ертÿçине,

**Раиса Васильевна СТОЛЯРОВАНА**, Муркашри чăх-чĕп фабрикин бухгалтерне.

Нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçре активлă пулнăшăн:

**Вячеслав Алексеевич БИРЮКОВА**, «Çеçпĕл» предприятин техника директорне,

**Галина Семеновна КОНДРАТЬЕВАНА**, Муркашри чăх-чĕп фабрикин сутуçине.

Нумай çул тÿрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн тата обществăлла ĕçре активлă пулнăшăн Муркаш пасар ертÿçине **Евгений Николаевич СУББОТИНА**.

Уяв умĕн

## Республика кунĕ çĕнĕлĕхпе савăнтарĕ

Ытлари кун Чăваш Ен премьер-министрĕ Сергей Гапликов 2008 çулхи Республика кунне хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен йĕркелÿ комитечĕн ларăвне ирттернĕ. Уяв кăçал Шупашкарта, Муркаш тата Йĕпреç районĕсенче пулать.

Экономика аталанăвĕпе суту-илÿ министрĕ Иван Моторин «Регионсем – чиксĕр ĕçтешлĕх» инвестици форумне мĕнле хатĕрленнипе паллаштарнă.

Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министрĕн çумĕ Виктор Бондарев Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн XVI «Раççей çăл куçĕсем» фестивале, Пĕтĕм Раççейри ал ăстисен изделийĕсен VI «Ăста Рус» конкурсне хатĕрленни çинчен каласа панă. Вăл палăртнă тăрăх республикăна Раççей Федерацийĕн 54 регионĕнчен, чикĕ леш енчи 6 çĕршывран пултарулăх коллективĕсем килмелле. 10 коллектив Муркаш тата Йĕпреç районĕсене ĕçлĕ.

Республика кунĕ тĕлне Президентăн Б.Н. Ельцин ячĕллĕ библиотекин регионти центрне, Муркаш районĕнчи Кашмашри, Йĕпреç хула тăрăхĕн Культура çурчĕсене уçма палăртнă.

Хула строительствипе обществăлла инфратытăмĕн аталанăвĕн министрĕ Александр Гончаров Республика кунне уявлассипе çыхăннă объектсен строительствин мĕнле пынипе паллаштарнă. Вăл Йĕпреç тата Муркаш районĕсенче çулсен строительствине вĕçлес енĕпе ĕçленине палăртнă.

Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Нина Суслонова пысăк объектсен, çавăн пекех Муркаш районĕнчи Шетмĕпуç врач амбулаторийĕн никĕсĕ çинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн уйрăмĕн, Шупашкар хулинчи 2-мĕш больница никĕсĕ çинчи амбулатори хирургийĕн центрĕн строительстви пе паллаштарнă.

Муркаш районĕн пуçлăхĕ Юрий Иванов Республика кунĕнчи мероприятисем тата çав кун уçма палăртакан çĕнĕ объектсем çинчен пĕлтернĕ.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Çамрăк педагогсен канашĕ

Иртнĕ эрнере çамрăк педагогсен канашĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулчĕ.

Пĕр шухăшлă пулса педагогсем канаша ертсе пыма Мăн Сĕнтĕр шкулĕнчи Людмила Валерьевна Храмова учительницăна шанчĕç. Унăн çумĕ – Муркаш лицейĕнчи Роман Николаевич Сапожников учитель.

Канашра икĕ ĕç ушкăнĕ йĕркеленĕ, çулталăк валли ĕç планне çирĕплетнĕ. Çывăх вăхăтра ĕçлекен çамрăксем хушшинче КВН, спартакиада тата çамрăк специалистсен конкурсне ирттерме палăртнă.

## Библиотекăсем – суйлавçăсене

РФ Президенчĕн суйлавĕ çывхарнă май библиотекăсем те хăйсен тÿпине хывма тăрăшаççĕ. Суйлавçăсене суйлав саккунĕсемпе паллашма майсем туса параççĕ.

Муркашри ялсем хушшинчи библиотекăра ятарлă выставка йĕркеленĕ. Кунта саккун акчĕсене, кандидатсен списокĕсене вырнаçтарнă. Суйлав ыйтăвĕпе ытти литература та пур.

## Хамăр тăрăшсан Турă та пулăшать

Районта 11 тĕн пĕрлешĕвĕ ĕçлет. Вĕсем пурте православи тĕнне тытса пыраççĕ. Район администрацийĕ çумĕнчи ятарлă канаш тĕн пĕрлешĕвĕсен ĕçне йĕркелесе пырать.

Ырă ĕçсен çулталăкĕнче ял çыннисен кăмăл-сипетне аталантарассипе, ялсене тирпей-илем кĕртессипе чылай ĕç тума палăртаççĕ. Районта Республика кунне уявлани те ку енĕпе тăрăшма хистет.

## «Ташлар-ха савăнса»

Çак ятпа районти хореографи коллективĕсен конкурсĕ иртет. Ăна районти культура пайĕпе ача-пăча искусствин шкулĕ йĕркелеççĕ. Конкурса шкулсенче вĕренекен ачасене явăçтараççĕ.

Çапла вара шкулсенче вĕренекен ачасем анлă пĕлÿ илнипе çырлахмаççĕ, тĕрлĕ енлĕ аталаннă çынсем пулса ÿсеççĕ. Халăх юрри-кĕввине упрама та пĕлеççĕ.

Раççейре

## *Кашни киле – автомобиль*

Çĕршывра автомобильсем туянасси ÿсет. Иртнĕ çул çак кăтарту 35 процент пысăкланнă. Раççей гражданĕсем 2 миллион та 800 пин машина туяннă. Мускавра паян çавăн чухлĕ автомобиль чупать.

Чикĕ леш енчи автофирмăсем пирĕн çĕршывра 24 завод лартаççĕ. Тепĕр 4 çултан кунта пĕр миллион ытла иномарка кăларма пуçлаççĕ.

Паян çĕршывра 38 миллион ытла (совет саманинче 12 миллион ытла) автомобиль регистрациленĕ.

2007 çулта хамăр заводсем автомобильсем кăларассине 5 процент чакарнă. Пĕтĕмпе 765 пин машина сутнă.

Апла пулин те 2010 çул тĕлне автомобильсем сутасси çĕршывра чакма пуçлать тесе шутлаççĕ.

**Автомобильсен хисепĕ 1000 çын пуçне**

| Çĕршывсем | Автомобильсем |
|---|---|
| США | 760 |
| Итали | 565 |
| Франци | 565 |
| Австри | 560 |
| Германи | 520 |
| Япони | 550 |
| Раççей | 300 |
| Инди | 20 |
| Китай | 20 |

Пултаруллисене пĕлме

## *Корреспондентсене ĕçе илетпĕр*

**Райхаçат редакцийĕ корреспондентсене ĕçе илесси çинчен пĕлтерет.**

**Февралĕн 11-мĕшĕнчен кая юлмасăр райхаçатра ĕçлеме кăмăл пуррисен редакцие резюме çитермелле. Кашнин хăйĕн пултарулăхне çирĕплетекен материалсене тăратмалла.**

**Ыйтса пĕлмелли телефон: 2-11-36.**

## Çырăнтару – 2008

### Малтанхи хакпа çырăнăр

**«Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçата июнь уйăхĕнчен илсе тăма февральте малтанхи хакпа çырăнтараççĕ.**

**Ултă уйăха çырăнмалли хак – 169 тенкĕ те 62 пус.**

**Район хаçатне хакланиччен çырăнса илĕр!**

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**